27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 11 ВЫРСАРНИКУН 27(6778) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Совет Союзӗн Маршалне ***РОКОССОВСКИЕ***

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-лейтенанта ***БОГОЛЮБОВА***

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ группировки хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, паян, февралӗн 10-мӗшӗнче, **ЭЛЬБИНГ** хулине—ҫулйӗрсен пысӑк узелне тата нимӗҫсен **ВИСЛА** шывӗн сылтӑм хӗрринчи оборонин вӑйлӑ тӗрекетленӗ пунктне, Данциг бухти патне пымалли вырӑнсене хӳтӗлесе тӑраканскерне—штурмласа туртса илнӗ.

ЭЛЬБИНГ хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ФЕДЮНИНСКИЙ** генерал-полковникӑн, **КОКОРЕВ** генерал-лейтенантӑн, **АНИСИМОВ** генерал-лейтенантӑн, **ФЕТИСОВ** генерал-майорӑн, **ЯКУШЕВ** генерал-майорӑн, **КУРЕНЬ** полковникӑн, **ДЕМИДОВ** генерал-майорӑн, **ЧЕСНОКОВ** полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-майорӗн **КАЗАКОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **РОГОЗИНАН**, **ОСТАНИН** полковникӑн, **КРИВОШЕЕНКО** полковникӑн, **МИХАЙЛЕНКО** полковникӑн, **КУЛИЧИН** полковникӑн, **БОНДАРЕНКО** подполковникӑн, **ВОЛКОВ** подполковникӑн артиллерисчӗсем; **МИРОНОВИЧ** полковникӑн, **КОПЫЛОВ** подполковникӑн, **ДОБИН** майорӑн, **ТРЕПОВ** майорӑн танкисчӗсем; **СМОЛОВИК** полковникӑн, **ВУСС** полковникӑн, **ЯКУШИН** полковникӑн, **БАРДЕЕВ** подполковникӑн летчикӗсем: **АЛЕКСАНДРОВ** подполковникӑн, **БАБАЕВ** полковникӑн, **ШОСТАК** полковникӑн, **ЖУКОВСКИЙ** подполковникӑн саперӗсем; **БАХИЛИН** полковникӑн, **ЗВОНОВ** майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ҫаланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ЭЛЬБИНГ** хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «**ЭЛЬБИНГСКИ**» тесе ят пама тата орденсемпе награлӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 10-мӗшӗнче, 20 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсене, **ЭЛЬБИНГ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **ЭЛЬБИНГ** хулине туртса илесшӗн ҫапӑҫнӑскерсене, пурне те чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТАВАТАП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗ. № 271.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующине

Арми генералне ***ЧЕРНЯХОВСКИЕ***

Фронт штабӗн начальникне

Генерал-полковника ***ПОКРОВСКИЕ***

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, февралӗн 10-мӗшӗнче, **ПРЕЙСИШ АЙЛАУ** хулине—ҫулйӗрсен пахаузелне тата нимӗҫсен Хӗвелтухаҫ Пруссири оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—ҫапӑҫса туртса илнӗ.

ПРЕЙСИШ АЙЛАУ хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне ҫаксем чапа тухнӑ: **ЛУЧИНСКИЙ** генерал-лейтенантӑн, **ЧАНЧИБАДЗЕ** генерал-лейтенантӑн, **РОГАЧЕВСКИЙ** генерал-майорӑн, **ЛЕВИН** генерал-майорӑн, **БАТИЦКИЙ** генерал-майорӑн, **ШВАРЕВ** генерал-майорӑн, **АЛЕКСАНДРОВ** генерал-майорӑн, **ЛЮХТИКОВ** генерал-майорӑн, **КУЗНЕЦОВ** генерал-майорӑн, **ШАЦКОВ** полковникӑн, **РЫБАЛКО** полковникӑн, **ТУРЧИНСКИЙ** генерал-майорӑн, **ПОПОВ** полковникӑн, **ДАНИЛОВ** генерал-майорӑн, **ВЛАДЫЧАНСКИЙ** генерал-майорӑн, **МЫШКИН** генерал-майорӑн, **ЛЕОНОВ** полковникӑн, **САМОХВАЛОВ** генерал-майорӑн, **САБЕНКО** полковникӑн ҫарӗсем; артиллери генерал-полковникӗн **БАРСУКОВАН**, артиллери генерал-майорӗн **ПЕТРОПАВЛОВСКИН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **СТРЕЛЬБИЦКИН**, **СТРУЕВ** полковникӑн, **КИРИЛЛОВ** полковникӑн, **КОСТИКОВ** полковникӑн, **ТИШИН** полковникӑн, **ЗУБКОВ** полковникӑн, **ВИШНЕВСКИЙ** полковникӑн, **АФАНАСЬЕВ** подполковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-полковникӗн **РОДИНАН**, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн **БУТКОВАН**, **СОММЕР** полковникӑн, **КУЗНЕЦОВ** полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **ХРЮКИНАН**, авиаци генерал-майорӗн **НЕЧИПОРЕНКАН**, **ЧУЧЕВ** полковникӑн, авиаци генерал-майорӗн **ШЕВЧЕНКАН**, авиаци генерал-майорӗн **МОЛОКОВАН** летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн **БАРАНОВАН**, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн **ЖИРОВАН**, **ЛЕВИН** полковникӑн, **АНТОНОВ** полковникӑн, **КУШНИР** полковникӑн саперӗсем: ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-лейтенанчӗн **БУРОВАН**, ҫыхӑну ҫарӗсен генерал-майорӗн **КОКОРИНАН**, **ПЛОТКИН** полковникӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ҫаланлӑха палӑртса хӑварас тесе, **ПРЕЙСИШ АЙЛАУ** хулине туртса илессишӗн ҫапӑҫнӑ чухне уйрӑмӑнах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 10-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици **МУСКАВ**, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 3-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, **ПРЕЙСИШ АЙЛАУ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, **ПРЕЙСИШ АЙЛАУ** хулине туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, пурне те чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн **ТАВ ТАВАТАП**.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗ. № 272.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 9-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 9-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем **ХӖВЕЛТУХАҪ ПРУССИРЕ**, **КЕНИГСБЕРГ** хулинчен кӑнтӑртарахра, 30 ял ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—**ШНАКАЙНЕН**, **БАРСЛАК**, **ДИНГОРТ**, **ШЛОДИТГЕН**, **НОЙЕНДОРФ**, **ВОРИНЕН**, **ШТАБУНКЕН** ятлӑ пысӑк ялсем. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах **ЭЛЬБИНГ** хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем **ФРИШ ГАФ** заливӗ хӗрринче **ФРАУЕНБУРГ** хулине туртса илнӗ. Пирӗн ҫарсем **ЭЛЬБИНГ** хулине ҫавӑрса илнӗ те тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

ШТАРГАРД хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ. нимӗҫ Померанийӗнче **ГЛАНДЕК**, **КЛАЙН ЗИЛЬБЕР**, **ШТОЛЬЦЕНФЕЛЬДЕ**, **ПЕТЦНИК**, **БРАЛВЕНТИН**, **ДЕЛИТЦ**, **ПЛЕНЦИХ** ялӗсене туртса илнӗ. **АРНСВАЛЬДЕ** хулинчи тӑшман гарнизонне хупӑрласа илнӗ. Февралӗн 8-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ку районра 800 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БУДАПЕШТРА пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ. 15 квартал туртса илнӗ. Февралӗн 8-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем хулан хӗвеланӑҫ пайӗнче (**БУДАРА**) тӑшманӑн 900 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

СЕКЕШФЕХЕРВАР хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, атакӑсем туса, **ШОПОНЬЯ**, **КАЛОЗ**, **ДЕГ**, **ЛАЙОШ-КОМАРОМ**, **ЭНЬИНГ**, **ШИОФОК** ятлӑ пысӑк ялсене туртса илнӗ.

Февралӗн 8-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 174 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 55 самолетне персе ӳкернӗ.



Укерчӗк ҫинче: Пирӗн земляк — летчик К. П. Павлов лейтенант. Нимӗҫ захватчикӗсемпе паттӑррӑн ҫапӑҫнӑшӑн ӑна Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр тата Хӗрлӗ Ялав орденӗсемпе наградӑланӑ. К. Павлов юлташ—Калинино районӗнчи Шӑхаль ялӗнчен.

Хӗрлӗ ялавлӑ МТС-ра

1944 ҫулхи декабрь уйӑхӗнче тракторсене юсамалли плана иртерсе тултарнӑшӑн тата ӑмӑртура мала тухнӑшӑн, ВЦСПС-па ССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ хӑйсен куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Шӑхасан МТС-не пама йышӑннӑ, укҫан преми 20 пин тенкӗ панӑ.

Ҫак хисепе МТС коллективӗ мӗнле кӗрешсе илчӗ-ха? МТС-ӑн 4-мӗш кварталта 16 трактор юсамалла пулнӑ. Кашни тракторӑн мӗн ҫитменнине пӑхса тухса, график туса хатӗрленӗ. Кашни бригадӑна харпӑрхӑйӗн тракторӗсене юсама хушнӑ. Январӗн 1-мӗшӗ тӗлне тракторсене пӗтӗмӗшпех юсаса пӗтерме палӑртнӑ. Юсавра ӗҫлекен трактористсемпе механиксем кану кунӗсемсӗр, мастерскойран тухмасӑр ӗҫленӗ. Юсав вӑхӑтӗнче цехсенче ҫутӑ пулманни пысӑк чӑрмав кӳнӗ. Анчах та чӑрмавсене ҫӗнтерес тӗлӗшпе старши механик Северов, механиксем Альфонцев, Денисов юлташсем «ГАЗ» машинин моторне ӳрӑхлатса шкиф туса лартнӑ. Мотора керосинпа ӗҫлемелле тунӑ. Мотор ӗҫленӗ май мастерскойри станоксем те ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Ҫапла вара электричество токӗ ҫук пулнӑ пулин те, станоксем ӗҫлемесӗр ларман. Старши механик Северов юлташ иртнӗ ҫулта хӑй чертеж туса, ҫавӑн тӑрӑх эксцентрический пресс тунӑ. Ҫав преспа ӗҫлесе кирлӗ гайкӑсене пурне те мастерскойрах тунӑ, магнетон хӑвӑртлӑх чӑссене те ҫав преспа кассах тунӑ. Пресс «ГАЗ» машинин моторӗпех ӗҫлет.

Юсав ӗҫне МТС ҫакӑнтан пуҫланӑ. Тракторсене юсаччен салатса хунӑ, ун хыҫҫӑн тракторсен кирлӗ подшипникӗсем ҫукки палӑрнӑ. МТС коллективӗ пите кирлӗ подшипниксене те ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Октябрь уйӑхӗн юлашки кунӗсенче юсав ӗҫӗ хӗрӳллӗн пуҫланса кайнӑ.

Пӗрремӗш бригадӑра 6 тракторист. Бригадир пулса Я. Сергеев юлташ ӗҫлет. Вӑл юсав ӗҫне плугарьсемпе заправщиксене те хутшӑнтарнӑ. Кашни тракторист харпӑрхӑй ӗҫлекен трактора юсанӑ. Чи малтан 3-мӗш номерлӗ тракторӑн трактористчӗ И. Долгов хӑйӗн тракторне планран темиҫе кун малтан юсаса пӗтернӗ. Юсав ӗҫӗнче Долгов юлташа хӑйӗн хӗрачи М. Долгова лайӑх пулӑшса пынӑ. Сергеев юлташ бригадинчи Микушкин, Андреев т. ыт. те лайӑх ӗҫленӗ. Вӗсем юсанӑ тракторсене государство комиссийӗ лайӑх тесе йышӑннӑ.

4-мӗш бригада бригадирӗ Н. Александров тракторсене юсанӑ ҫӗрте лайӑх ӗҫленӗ. Бригадӑри трактористсем Н. Антонов, П. Кириллов, Ф. Филиппов вике трактора срокчен юсаса пӗтернӗ. Хуть те мӗнле машинӑна та лайӑх тытма пӗлес пулать, вӑхӑтра тасатас пулать, кӑлтӑксене ҫийӗнчех пӗтерес пулать. Сергеевпа Александров юлташсем хӑйсен бригадинчи трактористсене типтерлӗ пулма, машинӑна юратма вӗрентсе ҫитернӗ. Трактористсем хӑйсем ӗҫлекен тракторсене ҫулла та, кӗркунне те юсасах тӑнӑ. Кирлӗ чӑссене пӗрмаях тасатнӑ. Ҫавӑнпа та вӗсен тракторӗсене тӗпренех юсама ҫӑмӑлрах пулнӑ. Типтерлӗ тытнӑ тракторсен юрӑхсӑрра тухса е ҫӗнӗнсе пӗтнӗ пайсем, ытти бригадӑри тракторсемпе танлаштарсан, сахал пулнӑ. Юсав ӗҫӗнче мала тухасси—пӗтӗмпех ҫавӑнтан, тракторсене ӗҫленӗ чухне типтерлӗ тытнинчен килнӗ.

Тракторсен 10-мӗш бригадинчи старши тракторист Серафим Михайлов юлташӑн ӗҫӗнче лайӑх енсем сахал мар. Вӑл тракторист пулса 9 ҫул ӗҫлет. Тракторӑн кашни пайне тӗплӗн вӗреннӗ вӑл. Уйра сухаланӑ чухне яланах тракторӑн моторӗ мӗнле ӗҫленине тӗплӗн итлесе пыма тӑрӑшать. Лайӑх мастер яланах ситменлӗхе хӑвӑрт сисет. Тӗтӗм ытларах тухма пуҫласанах, трактора тӑратать те карбюраторӑн регулятор тӗпне юсать. Ытти пайӗсене те тӗплӗн пӑхса тухать. Ҫапла вара вӑл ӗҫлекен трактор нихӑҫан та ҫӗмӗрӗлмест, унӑн пӗтӗм пайӗсем тӗрӗс ӗҫлеҫҫӗ. Юсавра та вӑл тӗплӗн ӗҫленӗ. Трактора хӑвӑрт юсанӑ.

МТС-ра ун пек трактористсем сахал мар. Иван Сидоров, Никита Тимофеев бригадисенчи трактористсем те хӑйсене шанса панӑ машинӑсене юратаҫҫӗ, типтерлӗ тыткалаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та вӗсен бригадисенчи тракторсен юрӑхсӑра тухнӑ пайсем питех те сахал пулнӑ. Ҫакӑ вӑл тракторсене хӑвӑртрах, чӑрмавсӑртарах юсаса пӗтерме май панӑ.

Анчах та трактористсем хушшинче машинӑна ачашшӑн тытма, яланах тасатса тӑма, кӑлтӑксене ҫийӗнчех тӳрлетме хӑнӑхса ҫитейменнисем те пур. Ҫавӑн пирки тракторсен пайӗсем хӑвӑрт кивелеҫҫӗ, юрӑхсӑра тухаҫҫӗ. Юсанӑ чухне чылай пайсене ҫӗнетмелле е тӗпренех ҫӗнӗрен тумалла пулать. Тракторсен пайӗсене ҫӗнӗрен тума тата кивӗсене ҫӗнетме Шӑхасан МТС мастерскойӗнче условисем ҫителӗксӗр. Апла пулин те старши механик Северов юлташ уйрӑм пайсене ҫӗнетмелли майсене хӑй шыраса тупать, мӗнле пая мӗнле тумаллине ытти механиксене те вӗрентет.

Юсав вӑхӑтӗнче пурӗ МТС мастерскойӗнче тӗрлӗрен пайсене 11.400 тенкӗлӗх ҫӗнӗрен туса хатӗрленӗ. Кивӗ пайсене 15 пин тенкӗлӗх ӳрӑхлатса ҫӗнетнӗ. Ҫапла вара МТС коллективӗ, тӗл пулнӑ йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, тракторсене пурне те декабрӗн 31-мӗшӗнче юсаса пӗтернӗ.

Юсанӑ тракторсене пурне те ӗҫлеттерсе пӑхса, Государство Комиссийӗ йышӑннӑ. Тракторсем ҫуракине хатӗр. Вӗсене пурне те сарайсене типтерлӗн кӳртсе лартнӑ.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ тракторсене юсанипе кӑна пӗтмест-ха. Кӗкарса ӗҫлемелли машинӑсене, комбайнсемпе молотилкӑсене хӑвӑртрах юсаса пӗтермелле. Ку тӗлӗшпе те МТС-ра нумай ӗҫсем тунӑ. Плугсене юсаса пӗтернӗ, комбайнсен моторӗсене 12 юсанӑ, сеялкӑсем 17 юсанӑ, культиваторсене пурне те юсаса пӗтернӗ.

Ҫуракине тухиччен кадрсене лайӑхрах пӗлӳ парас тесе, 40 ҫынна тепӗр хут вӗрентеҫҫӗ. Бригадирсем хатӗрлес тӗлӗшпе 8 ҫынна Канашри механизаци шкулне янӑ.

Юсав пынӑ вӑхӑтра МТС-ри парторганизаци политикӑллӑ ӗҫе начар мар туса пынӑ. Парторганизаци секретарӗ Мишуткин юлташ трактористсем хушшинче яланах калаҫусем, докладсем туса иртернӗ. Трактористсене Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен тӗнчери лару-тӑру ҫинчен докладсем туса панӑ. Трактористсене парти ретне илес тӗлӗшпе парторганизаци пӗрмаях ӗҫленӗ. Тракторсене юсанӑ вӑхӑтра лайӑх ӗҫлекен трактористсене 4 ҫынна ВКП(б) членӗн кандидатне, 3 трактористa ВКП(б) членне илнӗ. Сафрон Илларионов хӑйӗн тракторне графикра палӑртнинчен чылай малтан юсаса пӗтернӗ. Ӑна ВКП(б) членне илнӗ. Ҫавӑн пекех И. Григорьева ВКП(б) членне, А. Осипова ВКП(б) кандидатне илнӗ, бригадирсен шкулне вӗренме янӑ.

МТС кӑҫалхи ҫуракине тата ытти ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласшӑн кӗрешет.

С. ШАДИН,
(«Чӑваш Коммуни» корр.).

Профсоюзпа комсомолӑн йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне кӑтартуллӑн ирттерер

ВЦСПС-па ВЛКСМ Центральный Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, ҫак ҫулхи февралӗн 18—25-мӗшӗсенче республикӑри хуласемпе район центрӗсенче, рабочи поселокӗсенче, колхозсемпе шкулсенче профсоюзпа комсомолӑн йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне ирттерме палӑртнӑ. Ӑмӑртӑвӑн тӗллевӗ—ӗҫҫыннисене йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентесси тата вӗсене ГТО нормисене пама аплӑн явӑҫтарасси пулса тӑрать. Ҫавӑн пекех ӑмӑртура халӑха йӗлтӗрпе ҫӳреме вӗрентес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫленӗ профсоюз, комсомол, физкультура организацийӗсене, шкулсене, всевобуч подразделенийӗсене палӑртмалла.

«Пӗр ҫамрӑк та кроса хутшӑнмасӑр ан юлтӑр!»—ҫакӑн пек лозунгпа ирттермелле йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑва. ВЛКСМ уставӗ кашни комсомолецӑн ҫар ӗҫне вӗренме тивӗҫли ҫинчен калать. Комсомол фронтра чи малти ретре пулса ҫапӑҫма, ҫӗршыва сыхлама яланах хатӗр пулмалла. Ҫакӑ вӑл пурниншӗн те закон. Ӑна пурнӑҫламан комсомолец вӑл—чӑн-чӑн комсомолец мар. Комсомолецсен хӑйсемпе пӗрле союзра тӑман ҫамрӑксене те аплӑн явӑҫтармалла.

Йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑва тӗрлӗ шкулсенче вӗренекенсем, служащисем тата рабочисемпе колхозниксем хутшӑнаҫҫӗ. Ӑмӑртӑвӑн программи ҫакӑн пек: БГТО нормине паракан арҫын ачасемшӗн 3 километра зачет вӑхӑчӗ 18—22 минут, хӗрачасемшӗн 2 километра 16—18 минут. ГТО нормин пӗрремӗшпе иккӗмӗш сыпӑкӗсене паракансемшӗн зачет вӑхӑтне вӗсем миҫе ҫултине пӑхса лартаҫҫӗ. Ӑмӑртура мала тухнӑ организацисемпе уйрӑм йӗлтӗрҫӗсене куҫса ҫӳрекен ялавсемпе хисеплӗ грамотӑсем параҫҫӗ.

Районсемпе хуласенче йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑва хатӗрленсе ирттерес тӗлӗшпе 7—9 ҫынтан оргкомитет тумалла. Унта профсоюзпа комсомол тата физкультура организацийӗсен, всевобучӑн, районри е хулари ҫутӗҫ пайӗн, ӗҫ резервӗсен, сывлӑх организацийӗсен представителӗсем пулмалла.

Йӗлтӗрлӗ ӑмӑрту пуҫланиччен нумай вӑхӑт юлмарӗ. Ҫавӑнпа та ҫак кунсенчех ӑна хатӗрленме тытӑнас пулать. Коллективпа тата уйрӑмӑн усӑ курмалли йӗлтӗрсене пурне те йӗркене кӗртсе ҫитерсе тренировкӑллӑ занятисем ирттерме тытӑнмалла. Йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑва хатӗрленес ӗҫе тӗрӗс организацилесен ҫеҫ, тӑтӑшах тренировкӑллӑ занятисем ирттерсен ҫеҫ тата ҫак ӗҫе ҫынсене йышлӑн явӑҫтарсан ҫеҫ ӑмӑртура малти вырӑна тухма пулать. Ӑмӑртӑва хатӗрленнипе пӗрлех 20—30 сехетлӗ программа тӑрӑх йӗлтӗрҫӗ-боецсем хатӗрлесси, ҫӗнӗрен физкультура коллективӗсем тӑвасси, обществӑллӑ инструкторсем хатӗрлесси ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

Йӗлтӗрлӗ ӑмӑрту вӑл—массӑллӑ мероприяти. Ҫавӑнпа та ялти халӑхсене ун ҫинчен аплӑн ӑнлантарса памалла. Ӑмӑрту кунӗсенче шкул ачисемпе всевобуч боецӗсем, колхозниксем спортӑн чаплӑ уявӗ иккене туйччӑр. Ӑмӑртӑва лайӑх хатӗрленсе, ӑнӑҫлӑ ирттерме тӑрӑшмалла. Иртнӗ кунсенче хӑшпӗр районсем тунӑ йӑнӑшсене тепӗр хут тӑвассиничен сыхланас пулать.

Йӗлтӗрлӗ ӑмӑрту вӑл—ҫамрӑксене физкультурӑпа ҫар ӗҫне вӗрентес ӗҫӗн пуҫламӗшӗ ҫеҫ-ха. Ӑна малалла туса пымалла. Хӑшпӗр комсомол тата профсоюз организацийӗсенчи юлташсем ҫак ӗҫе вӑхӑтлӑх мероприяти вырӑнне ҫеҫ шутлаҫҫӗ. Ӑмӑртусем иртсен ҫак ӗҫ ҫинчен манса каяҫҫӗ, вӑл хӑй тӗллӗн пуласса шанаҫҫӗ.

Йӗлтӗрлӗ ӑмӑрту иртересси ВЛКСМ комитечӗсенчи ҫарпа физкультура комиссийӗсемшӗн чӑн-чӑн экзамен пулса тӑрать. Ҫак комиссисем ҫамрӑксене ҫарпа физкультура тӗлӗшӗнчен воспитани паракан боевой органсем пулса тӑмалла. Вӗсен ӗҫне вӑйлатмалла. Вӗсем тавра актива, спорт мастерӗсене, квалификациллӗ инструкторсене, ҫар ӗҫне пӗлекен ҫынсене явӑҫтармалла.

Ӑмӑрту ӑнӑҫлӑн иртесси комсомолпа профсоюз организацийӗсем ҫак ӗҫе тивӗҫлипе тытӑннинчен килет. Профсоюзпа комсомолӑн йӗлтӗрлӗ ӑмӑртӑвне кӑтартуллӑн ирттерни республикӑри ҫамрӑксен Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ кунӗ тӗлне чи хаклӑ парнийӗ пулӗ.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомӗн ҫарӗҫ енӗпе ӗҫлекен секретарӗ.

ВКП(б) Обкомӗнче

Первомайски районра агротехникӑпа зоотехникӑна вӗренес тата колхозсем валли массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫакна палӑртрӗ: Первомайски районри колхозсенче массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес тата агротехникӑпа зоотехникӑна вӗренес ӗҫе пачах та ҫителӗксӗр йӗркеленӗ. Районри артельсенче нумайӗшӗнче колхозниксемпе колхозницӑсене агротехникӑпа зоотехника кружокӗсенче массӑллӑн вӗрентес ӗҫе ҫак вӑхӑта ҫитсе те организацилемен. Районри ҫӗрӗҫ пайӗ панӑ даннӑйсем тӑрӑх, 25 колхозра агротехника кружокӗсем организациленӗ, вӗсене 500 колхозника явӑҫтарнӑ. Тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн ҫак даннӑйсем тӗрӗс мар пулни палӑрнӑ. Сӑмахран, «КИМ» колхозра 5 занятӗ, «Осоавиахим» колхозра — 3, «Ҫӗнтерӳ» колхозра—2, «Совет» колхозра пӗр занятӗ ирттернӗ тесе кӑтартса панӑ. Ҫав вӑхӑтрах ку колхозсенче, унта участокри тата колхозри агрономсем пур пулин те, чӑннипе илсен, агротехникӑна вӗренме тытӑнман. Кружоксенче занятисем ирттерме ялхуҫалӑх специалисчӗсемпе учительсене ҫителӗксӗр явӑҫтараҫҫӗ. Агротехникӑна пропагандӑлас ӗҫре политикӑллӑ ҫутӗҫ учрежденийӗсемпе пачах та усӑ курмаҫҫӗ. Чылай колхозсенче агротехника кружокӗсен ӗҫ планӗсем ҫук, ҫавна пула унта занятисем тӑтӑшах пулса пымаҫҫӗ, вӗсене ним йӗркесӗр тата колхозниксен пурнӑҫӗпе ҫыхӑнтармасӑр ирттереҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех колхозсем валли массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем хатӗрлемелли план та пурнӑҫа кӗрсе пымасть. Сӑмахран, ухир бригадисен бригадирӗсем пулма планпа 55 ҫын вӗрентсе хатӗрлес вырӑнне 28 ҫын кӑна, кок-сагыз енӗпе ӗҫлекен звеньевойсем пулма 22 ҫын вырӑнне 18 ҫын, вӗрлӑх акса тӑвас енӗпе ӗҫлекен звеньевойсем пулма 40 ҫын вырӑнне 3 ҫын кӑна вӗрентсе хатӗрленӗ. Пахча-ҫимӗҫ енӗпе ӗҫлекен звеньевойсене, сысна пӑхакансене, ӗне сӑвакансене, пӑру пӑхакансене, хурт-хӑмӑр ӗрчетӳҫисене тата ыттисене те вӗрентсе хатӗрлес енӗпе курссем ирттермен, ҫав вӑхӑтрах вӑл курссене уҫмалли срокӗсем тахҫанах иртсе кайрӗҫ ӗнтӗ. ВКП(б) райкомӗ колхозниксене агротехникӑна вӗрентес ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе начар ӗҫлет, партипе комсомолӑн пуҫламӑш организацийӗсен секретарӗсем ҫак енӗпе нимӗн те тумаҫҫӗ, парти райкомӗ райҫӗрӗҫ пайӗн ӗҫне тӗрӗслесе пыман тата ӑна кирлӗ пек пулӑшу паман.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫапла йышӑннӑ:

ВКП(б) Первомайски райкомӗн секретарьне Долгов юлташа ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ 1944 ҫулхи ноябрӗн 14-мӗшӗнче «Колхозсем валли массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлемелли мероприятисем ҫинчен» йышӑннӑ постановленине пӗр сӑмахсӑр пурнӑҫлама хушас тата ӑна ҫакна ӑнлантарса парас: колхозсем валли массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем вӑхӑтра вӗрентсе хатӗрлени районра ялхуҫалӑхӗ юлса пынине пӗтермелли чи кирлӗ ӗҫсенчен пӗри пулса тӑрать.

ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомне ҫапла тума хушас: кадрсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫри ҫитменлӗхсене халех пӗтерес тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнмалла, пур колхозсенче те колхозниксем массӑллӑн вӗренессине халех организацилемелле тата вӗсене ялхуҫалӑхӗнчи стахановецсен опытне вӗрентсе пӗлме, ялхуҫалӑх наукин ҫитӗнӗвӗсене вӗренсе пӗлме пулӑшмалла. Колхозсенчи ялхуҫалӑх кружокӗсенче вӗрентме райҫӗрӗҫ пайӗсемпе МТС-сен специалисчӗсене, шкулти учительсене явӑҫтармалла, ҫавӑн пекех тата, малта пыракансен опытне сарас шутпа, ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансене явӑҫтармалла, малта пыркан колхозсемпе бригадӑсене кайса экскурсисем организацилемелле. Агротехникӑпа зоотехникӑна вӗренес ӗҫе йӗркелеме колхозсене программӑсемпе тематика планӗсем парса пулӑшмалла, ҫав плансене тунӑ чухне районри уйрӑм колхозсен ҫитменлӗхӗсемпе ҫитӗнӗвӗсене, вӗсен уйрӑмлӑхӗсене шута илмелле, агротехникӑна пропагандӑлас ӗҫе политикӑллӑ ҫутӗҫ учрежденийӗсене аплӑн явӑҫтармалла. Звеньевойсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫ ҫине уйрӑмӑнах ҫавӑрӑнса пӑхмалла, звеносене яланлӑха участоксем ҫирӗплетсе памалла тата вӗсем пысӑк тухӑҫлӑ тырпулшӑн социализмлӑ ӑмӑртса ӗҫлессине организацилемелле.

ВКП(б) райкомне ҫапла тума сӗнес: ялхуҫалӑх кружокӗсен руководителӗсен квалификацине ӳстерес тата вӗсен опытне пӗтӗҫтерес шутпа, вӗсен семинарӗсене тӑтӑшах ирттермелле, яланах консультаци парас ӗҫе организацилемелле. Колхозсенче агротехника кружокӗсем тунипе пӗрлех лекцисем ирттерме, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пуҫхӑса ялхуҫалӑх литературине вулас ӗҫе организацилемелле, колхозсенче тӗп ӗҫ вӑйӗ пулса тӑракан хӗрарӑмсемпе подростоксене вӗренӗве ытларах явӑҫтарма тӑрӑшмалла. Вӗренӳре илнӗ пӗлӗве ҫирӗплетсе хӑварас тата пуянлатас майпа, вулакансен конференцисене ирттермелле.

ВКП(б) райкомне районри партипе совет активӗ валли агротехникӑпа зоотехника ыйтӑвӗсем тӑрӑх квалификациллӗ лекцисемпе докладсем ирттерме, колхозсенчи ертсе пыракан кадрсен политикӑллӑ тата ӗҫри квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе тӑтӑшах ӗҫлеме хушас.

Колхозсем валли массӑллӑ квалификациллӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫре ытти чылай районсенче те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. ВКП(б) райкомӗсене пурне те ҫак решение сӳтсе-явма, колхоз кадрӗсене вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе практикӑллӑ мерӑсем йышӑнма хушас.

Хӗрлӗ Ҫар кунӗ ячӗпе стахановла вахта

Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводри комсомолецсемпе ҫамрӑксен Дергачева юлташ ертсе пыракан бригади Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ ятпа стахановла вахтӑна тӑчӗ. Вӑл февраль уйӑхӗнчи плана 190 процент тултарма, брак тӑвассине пӗтерме, техника хӑрушсӑрлӑхӗн йеркисене ҫирӗппӗн пӑхӑнса тӑма тата ӗҫ вырӑнне яланах таса тытма пулчӗ.

Дергачева юлташ ертсе пыракан бригадӑн пуҫарӑвне пӗтӗм цех коллективӗ тула кӑмӑлпа йышӑнчӗ. Унӑн пуҫарӑвне цехра пухура сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ ятпа стахановла вахтӑна Мочалова, Бурлакова тата ытти юлташсен бригадисем тӑчӗҫ. Цехра Хӗрлӗ Ҫар кунӗ умӗнхи ӑмӑрту ҫунран кун сарӑлса пырать.

(Хамӑр инфор.).

Литература кӗтесси

ЯНӐРА, САЛЮТ!

Паян Хӗрлӗ Ҫарӑн
Хастар уттипе
Янра, чаплӑ юрӑ,
Янра тӗнчипех!

Паян пирӗн аслӑ
Ҫӗршывӑм, Мускав
Салют парать чыслӑн,
Тулли хавасна.

Сана тав тӑвать вӑл,
Тӑван Хӗрлӗ Ҫар.
Эс турӑн мухтавлӑ
Пире пурнӑҫра.

Ҫӗршывӑм салючӗ,
Вӗҫ, эсӗ кӗрле!
Ман халӑх хӑвачӗ
Ҫӗклентӗр ҫӳле!

Сиссе ҫулӑмлантӑр
Хӗрӳ хӗвел пек.
Ҫӗршывӑм мухтантӑр
Тулли вӑйӗпе.

Вӑл ватрӗ хаяррӑн
Тискер тӑшмана,
Инҫе хуса кайрӗ,—
Ҫитет Берлина.

Аркантӑр, тӗп пултӑр
Ҫӗлен—ҫичӗ ют.
Мускавӑм мухтантӑр,
Янратӑр салют!

Александр САДИКОВ.

МАЛАЛЛА!

Сахал мар юрӑсем эпир хунӑ,
Вӗсем тухнӑ халӑх чӗринчен.
Сахал мар ирӗк юрӑ янранӑ
Пирӗн аслӑ Совет ҫӗрӗнче.

Халь тата пирӗн пур ҫӗнӗ юрӑ,
Кун пекки шӑранман халиччен.
Ку юрра пирӗн халӑхӑм хыврӗ,
Вӑл янрать Хӗрлӗ Ҫар уттинче.

Ку юрра юрласан, Хӗрлӗ Ҫарӑн
Иксӗлми вӑйӗнче вут сиҫет,
Ҫын юнне ӗҫекен нимӗҫсенӗн
«Ҫӗн йӗрки» арканать, сирпӗнет.

Кам юрлать ку юрра пӑлханмасӑр,
Анланса паянхи кунҫула,
Вӑл калать ҫӗршыва:—Пурӑн аслӑн!
Ҫемьине вӑл калать:—Ан хурлан!

Юрӑпа утакан кашни паттӑр
Тӑвана пусмӑртан хӑтарать.
Хӗн-хурпа мӑшкӑла тӳснӗ халӑх
Куҫҫульпе савӑнса ал парать.

Юрӑпа ыткӑнар-и хастаррӑн,
Малалла, тӑшмана аркатма!
Сап. юлташ, вирлӗнрех! Ҫӗнӗ юрӑ
Ирӗкре ӗмӗтлен шӑратма!

Иван ОТНЮКОВ.
Полевая почта 29765.

КӖСКЕ ҪЫРУ

Сан сӑнна—илӗртӳллӗ сӑнна
Асӑмрах ӳкеретӗп, сыхлатӑп,
Ҫирӗмри чӗрепе эп юратнӑ сана,
Халь кӑшт ватӑ пулин те, саватӑп.

Канӑҫми автомат нимӗҫсен пӗтӗвне
Ирӗн-каҫӑн ҫулать каҫарусӑр,
Эс мӗн турӑн, савни, тӑшмана ҫӗнтерме?
Ҫӗршыва ан хӑвар пулӑшусӑр!

Юрату нумай хут хӗрӳрех кӑвартан.
Хатӗрех, тавӑрӑнсан, туй тума та...
Эс мана юратса пӗр манмарӑн пулсан—
Маншӑн ӗмӗрлӗх тус эс пулатӑн.

Ал. ВОРОБЬЕВ.

«Чӑваш Коммуни» хаҫатӑн редакцине сӑвӑсемпе юрӑсем тата калавсем куллен килсе тӑраҫҫӗ. Вӗсене Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗн тӗрлӗ участокӗсенчен, республикӑри тата республика тулашӗнчи колхозсемпе предприятисенчен литература ӗҫӗпе интересленекен ҫамрӑксем ҫыраҫҫӗ. Вӗсен темисем нумай тӗрлӗ, анчах ҫав произведенисенчен нумайӑшӗсем литература тӗлӗшпе пулса ҫитмен, чылайӑшӗсен шухӑшӗсем кирлӗ пек пӗтӗҫсе йӗркеленеймен. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем хушшинче самай усӑмлӑ япаласем те пур. Ҫамрӑк авторсен творчествипе паллаштарас тата вӗсене ӳсме пулӑшас тесе, паян эпир лайӑхрах енӗпе палӑрса тӑракан хӑшпӗр сӑвӑсене пичетлесе кӑларма шутларӑмӑр.

ШУРА ТУТӐР

Шурӑ тутӑр аллӑмра,
Хӗррипе ун пурҫӑн тӗрӗ.
Ах, каймасть-ҫке асӑмран
Хитре сӑнӗ савнӑ хӗрӗн.

Ҫакӑ шурӑ тутӑр ман
Савнӑ хӗрӗмрен парнеччӗ.
«Нихӑҫан та эс ан ман,
Савнӑ каччӑмҫӑм»,—тесеччӗ,

Аҫтан манӑн-ха сана,
Асилтерӗш пур вӗт санӑн,
Шурӑ тутӑр тытсанах
Куҫ умнех килсе тухатӑн.

Пирӗн хушшӑмӑр инҫе,
Чӗресем пит сывӑх пирӗн.
Фронтовикӑн асӗнчен
Тухмӗ сӑнӗ савнӑ хӗрӗн.

В. СПИРИДОНОВ.
Отечественнӑй вӑрҫӑн II-мӗш степень орденӗн тата «За отвагу» медалӗн кавалерӗ.

ХЕЛ

Ентӗ ҫитрӗ шурӑ хӗл,
Ҫӗр юрпа пӗркенчӗ.
Манӑн тусӑм—ҫамрӑк хӗр
Йӗлтӗрпе вӗҫтерчӗ.

Йӗлме йӗлтӗр шӑвӑнать
Уйхир тӑрӑх хӑвӑрт.
Малалла чӑмать кӑна
Тусӑм-кӳршӗ хӗрӗ.

Ак вӑрман, чипер вӑрман,
Иртенпех вӑл лӑпкӑ.
Пит аван мӗн ярӑнма,—
Вӑрман ҫумӗн ыткӑн!

Хӗр вӗҫет сӑртран сӑрта —
Ҫилҫунатлӑ евӗр.
Вӑрман ҫумӗн пӗр вартан
Хӑвӑрт каҫса кайрӗ.

Пиччӗш пек вӑл ярӑнать,
Пиччӗш пек маттур вӑл.
Еҫре чух та пултарать
Ҫамрӑк хӗр, маттур вӑл!

Тӑван пиччӗш вӑрҫӑра
Ҫапӑҫать хӑюллӑн.
Ҫамрӑк хӗр «Вӑй» колхозра
Тек ӗҫлет ударлӑн.

Пани тухрӗ ярӑнма
Ав, мӗнле вӗҫет вӑл.
Сывлӑх кирлӗ, тет, пире
Тусӑм, комсомолка!

Сергей ЮШКОВ.

САНИТАРКА ЮРРИ

Ут ҫине сиксе утлантӑм
Эп колхоз анкартинче.
Чунӑм савнинчен вӑтантӑм
Чуптума васканинчен.

Тапӑрларӑм, утӑм сикрӗ
Сывлӑша тусан утса.
Военком патне час ҫитрӗм,
Кӗтӗм ун патне чупса.

Ашӑ кӑмӑлпа калаҫрӗ
Военком, хӑй капитан.
— Санитарка пулӑн,—терӗ, —
Вӑрҫӑра паян кунтан.

Ут ҫине сиксе утлантӑм,
Эп вӗҫтертӗм малалла.
Харсӑрлантӑм, чӑрсӑрлантӑм,
Умри ҫул—анӑҫалла!

ХАЛАПСИН ПЕТТИ.

ЕҪ ЮРРИ

Еҫ ӗҫлетӗн—пурнӑҫ тутӑ,
Пурнӑҫ ырӑ ӗҫре чух.
Эс кахал-и, е эс кутӑн —
Сан валли халь вырӑн ҫук.

Парӑнать пире хӗрӳ ӗҫ.
Тулӑх пурнӑҫ хамӑрта.
Эпир пурте—ҫӗнтерӳҫӗ
Ҫӗнтерӳллӗ тапхӑрта.

Кам ӗҫре пулать мухтавлӑ,
Кам ӗҫре ялан малта,
Вӑл тӑван ҫӗршывшӑн паллӑ,
Ана пӗтӗм ҫын мухтать.

Вӗҫ-ха, вӗҫ эс, ӗҫ юррийӗ.
Чаплӑ ӗҫ паттӑрӗсен
Мухтавне ҫӗкле ҫӗр ҫийӗн,
Тав туса, хисеплесе!

Н. ШЕВЛЕ.
Ҫапӑҫури ҫар.

Литература хыпарӗсем

„Тӑван Атӑл“ альманахӑн ҫӗнӗ кӗнеки

«Тӑван Атӑл» альманахӑн ҫӗнӗ (20-мӗш) кӗнекине пичете панӑ. Унта А. Еҫхӗл. М. Кибек, И. Саламбекӑн ҫӗнӗ калавӗсем. А. Алка, И. Малгай тата ыттисен сӑввисем, А. С. Грибоедовӑн «Аса пула инкек» комедийӗн малтанхи ыпӑкӗсем (вӗсене П. Хузангай куҫарнӑ), Я. Ухсайӑн «Тутимӗр» трагедийӗн юлашки пайӗ (вырӑсла) пичетленеҫҫӗ.

„Ҫӗрпе кӑвак тӳпе“

Нумаях пулмасть Искусство ӗҫӗсен Управленийӗнче чӑваш писателӗсемпе Академиллӗ театрӑн артисчӗсем Арк. Еҫхӗлӗн «Ҫӗрпе кӑвак тӳпе» ятлӑ ҫӗнӗ пьесине вуласа тишкерсе тухрӗҫ. Пьесӑра ҫамрӑк драматург Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пирӗн колхозниксем тылра мӗнле ӗҫленине кӑтартса парать. Тухса калакансем пурте ку произведение пит те кирлӗ вӑхӑтра ҫырнине, автор событисене тӗрӗс кӑтартса панине, уйрӑмӑнах пьесӑн чӗлхи питӗ пахине палӑртрӗҫ, ӑна театрсен репертуарне кӗртме сӗнчӗҫ.

„Тӑван ҫӗршывра“

Чӑвашсен паллӑ драматургӗ, искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ П. Н. Осипов «Тӑван ҫӗршывра» ятлӑ ҫӗнӗ пьеса ҫырса пӗтернӗ. Ана вӑл хӑех вырӑсла куҫарнӑ.

„Ҫутӑ кунсем“

Халӑх поэчӗ С. В. Эльгер вӑтам ҫулхи ачасем валли «Ҫутӑ кунсем» ятлӑ сӑвӑсен кӗнекине хатӗрлесе ҫитернӗ. Вӑл Чӑвашгосиздатра «Книжка-малышка» серипе тухать.

Парти пурнӑҫӗ

Политшкулсен малтанхи ӗҫӗсем

ЕТЕРНЕ. Кӑташри пуҫламӗш парторганизаци ҫумӗнче политшкул уҫӑранпа пӗр уйӑх иртрӗ ӗнтӗ. ВКП(б) райкомӗ политшкула ертсе пыма орденоносец Н. Степанов коммуниста ҫирӗплетрӗ. Степанов юлташ, политшкулӑн программипе паллашса, календарлӑ план турӗ, политшкула ҫӳрекенсен списокне парторганизацинче ҫирӗплетрӗҫ. Политшкулӑн пӗррӗмӗш занятийӗ декабрь уйӑхӗн юлашки кунӗсенче пулса иртрӗ. Ку занятире шкула ҫӳрекенсем программӑпа паллашрӗҫ, занятисене хӑш кун ирттермелли ҫинчен каласса татӑлчӗҫ. Ҫапла пуҫланчӗ политшкулӑн ӗҫӗ.

Шкула 9 коммунист, 17 комсомолец тата союзра тӑман 5 учитель ҫӳреҫҫӗ. Шкула ҫӳрекенсен вӗренес кӑмӑлӗ питех те пысӑк. Ҫакна шкулта вӗренекенсем лекци итленӗ хыҫҫӑн пулакан ыйтусем ҫине лайӑх ответсем пани те, вӗсем шкула йӗркеллӗ ҫӳрени те аванах кӑтартаҫҫӗ. Кашни занятирех лекцисемпе докладсем хыҫҫӑн лекторсемпе докладчиксем вӗренекенсене ыйтусем параҫҫӗ. Ҫак ыйтусем ҫине вӗренекенсем тӗплӗн ответлеме тӑрӑшаҫҫӗ. «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренес енӗпе лекцисене ҫамрӑк коммунист Н. Иванов юлташ вулать. Вӑл, лекцисене лайӑх хатӗрленсе, вӗренекенсене ӑнланмалла чӗлхепе вуласа парать. Лекторӑн чӗлхи лайӑх пулни вӗренекенсене материала тӗплӗн ӑнланма пулӑшать. Кунсӑр пуҫне тата вӗренекенсем килте хатӗрленеҫҫӗ, литературӑпа анлӑн усӑ кураҫҫӗ, нумайӑшӗ конспектсем ҫырса пыраҫҫӗ.

Ку тарана ҫитсе «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренес тӗлӗшпе 5 занятиСталин юлташӑн Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладне вӗренме виҫӗ занятитуса иртерӗ. Кашни заняти пуҫланас умӗн политшкула ҫӳрекенсем эрне хушшинче пулса иртнӗ тӗнчери событисем ҫинчен доклад итлеҫҫӗ.

Шкула ҫӳрекенсене вӗренме кирлӗ условисене те туса панӑ. Занятисем пулакан пӳлӗмре кирлӗ чухлӗ сӗтел-пукан, ҫутӑ хатӗрленӗ, кашни вӗренекене кирлӗ литература тупса панӑ. Политшкулӑн занятийӗсем пулакан кунсенче вӗренекенсем пурте шкула ҫӳреме пултарччӑр тесе парторганизаци ял Совечӗпе, колхоз правленийӗсемпе тата шкулсемпе вӑл кун пухусем, канашлусемпе ларусем тӑвас мар пирки те калаҫса татӑлнӑ.

Ҫитес кунсенче шкула ҫӳрекенсем Сталин юлташ ҫырнӑ «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине вӗренме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак кунсенчех парторганизаци политшкула ҫӳремен колхоз активӗ валли политкружок организацилет.

Н. ЦВЕТКОВ.

* * *

ЕЛЧӖК. Аслӑ Пӑла Тимешӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри коммунистсемпе комсомолецсем политшкул организацилерӗҫ. Унта пурӗ 26 ҫын вӗренет.

Малтанах Сталин юлташӑн Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци пулнӑранпа 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ докладӗпе приказне вӗренчӗҫ. Ку ыйтупа 3 заняти туса иртернӗ. Тӑваттӑмӗш занятире «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренме пуҫланӑ. Паянхи куна парти историйӗн икӗ сыпӑкне вӗреннӗ.

Коммунистсемпе комсомолецсем занятисене йӗркеллӗ ҫӳреҫҫӗ. Пуринчен ытла ВКП(б) членӗсем В. Зайцев (колхоз председателӗ), Н. Якимов (вулав ҫурчӗн заведующийӗ), П. Марков, Г. Телпин тата ытти юлташсем тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Берлинри лару-тӑру

СТОКГОЛЬМ. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Шведсен «Моргонтидинген» ятлӑ хаҫачӗ Берлинран ҫырса янӑ статьяна пичетлесе кӑларнӑ. Статьяра ҫапла калӑнӑ: «Берлин тулашӗнчи районсене чылайӗшне халӗ вӑрҫма хатӗр районсем тесе пӗлтернӗ. Унти халӑха урӑх вырӑна куҫарнӑ, суртсене нумайӗшне сирпӗнтере-сирпӗнтере яраҫҫӗ. Шпрее шывӗ ҫинчи кӗперсем айне минӑсем хурса тухнӑ. Берлина кӗмелли автомобильсен ҫулӗ ҫинче нумай вырӑнсенче чӑрмавсем туса тултарнӑ, минӑсем лартса тухнӑ. Берлин хулинче хӑйӗнче халӗ власть пӗтӗмпех гестапо аллине куҫнӑ. Хулан ҫирӗплетнӗ вырӑнӗсенче эсэсовецсен отрячӗсем тӑраҫҫӗ. Вӗсен ӗҫӗ—хулара хӗтӗлесси кӑна мар, халӑх восстани тума хӑтлансан ҫавӑнтах пусарса лартасси пулать. Берлинра хальхи вӑхӑтра ют ҫӗршыв рабочийӗсем 250.000 ҫынна яхӑн шутланаҫҫӗ. Вӗсен лагерӗсене питӗ хытӑ сыхлаҫҫӗ. Февралӗн 7-мӗшӗнче Берлинра фольксштурмӑн виҫҫӗмӗш черетне мобилизацилене. Мобилизациленӗ халӑх хушшинче халсӑр ҫынсем нумай».

Хӗвеланӑҫ Европӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, Неймегенран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре (Голландире) союзниксен ҫарӗсем наступлени пуҫласа янӑ. Наступлени туса пыракан союзниксен чаҫӗсене авиаци вӑйлӑн пулӑшнӑ. Ҫӗрле Гох тата Клеве ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Союзниксен чаҫӗсем малтанлӑха чылай паллӑ ҫитӗнӳсем тунӑ, халӗ вӗсем Рейхсвальд вӑрманӗн хӗвеланӑҫ хӗрри патӗнче тӑраҫҫӗ.

Халь тата Зигфрид линийӗн оборона сооруженийӗсен тулашӗнче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Рейн облаҫӗнче Коммершейдет хулине тытса илнӗ. Моншауран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре Шмидт тата Гаршейд хулисенче ҫапӑҫаҫҫӗ.

Ур шывӗпе Сюр шывӗ пӗрлешнӗ ҫӗрте ларакан Валленжорф союзниксен аллинче. Хагенауран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре (Лотарингире) тӑшмана Обергофенри тӗрекленӗ темиҫе пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Тӑшман Герлисхеймран тата Оффендорфран тухса кайнӑ.

Анатри Эльзас тӳремӗнче союзниксен ҫарӗсем тӑшмана Рейн шывӗ хӗрринчи ансӑр вырӑна—Гардт вӑрманӗпе юханшыв хушшине хӗстерсе лартнӑ. Темиҫе яла тата Гомбург хулине ирӗке кӑларнӑ.

Февралӗн 7-мӗшӗнче союзниксен ҫарӗсем 4.083 ҫынна тыткӑна илнӗ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн ҫар объекчӗсене тата ҫулйӗрӗсене атакӑланӑ.

ЛОНДОН. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, Италире 5-мӗш армин тинӗс хӗррин секторӗнче, союзниксен патрулӗсем темиҫе ҫӗр ярд малалла кайнӑ. Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусем пулман.

АНГЛИ АВИАЦИЙӖ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: февралӗн 9-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле акӑлчансен 1.000 бомбардировщикӗ Германие тапаннӑ. Пелиц хулинчи синтетически горючи заводӗ ҫине тата ытти объектсем ҫине те бомбӑсем пӑрахнӑ. «Москито» йышши самолетсем Берлина тапаннӑ.

Югославири ҫапӑҫусем

БЕЛГРАД. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Югослави халӑхӗн ирӗклӗх ҫарӗн верховнӑй штабӗн пӗлтерӗвӗнче ҫапла каланӑ: Подравинра тӑшман ҫӗнӗ вӑйсем илнӗ те пӗтӗм фронтпа наступлени пуҫарса янӑ. Хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ хыҫҫӑн тӑшман атакисене сире-сире пӑрахнӑ. Пуринчен вӑйлӑ ҫапӑҫусем Грубишно-Поле районӗнче пулса иртеҫҫӗ.

Словенире хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Пысӑк вӑй ҫухатса ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн тӑшман Подравска Слатина енелле пӑртак малалла куҫнӑ.

Дрињача Власеница секторӗнче Югослави чаҫӗсем, Дрињачана хӑварса, лайӑхрах позици ҫине чакнӑ. Вӑл секторта ирхинех хаяр ҫапӑҫусем пуҫланнӑ. Тӑшман Биелинӑран тухса тапӑнма хӑтланни ӑнӑҫлӑ пулман.

Босна шывӗ улӑхӗнче нимӗҫсен шултӑра вӑйӗсене хирӗҫ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Добой секторӗнче усташсен пысӑк группине пӗтерсе тӑкнӑ. Югослави чаҫӗсем Мостар районӗнче малалла тапӑнса пынӑ.

Словенире. Ново Место секторӗнче, Югослави чаҫӗсем каялла чакакан нимӗҫсен колоннине пысӑк сиен кӳнӗ.

Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗнче

ЛОНДОН. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Енер пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗн ирхи ларӑвӗнче организациллӗ комитетӑн докладӗ тӑрӑх прениссем пынӑ. Латинла Америкӑри ӗҫҫыннисен конфедерацийӗн делегачӗ Ломбардо Толедано сӑмах тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл союзниксен тӑшманӗ пулнӑ ҫӗршывсенчи профсоюзсене конференцие чӗнме йышӑннине ырланӑ.

Толедано хыҫҫӑн, организациллӗ комитетӑн сӗнӗвне хӳтӗлесе. Франци делегацийӗн пуҫлӑхӗ Луи Сайян сӑмах тухса каланӑ.

Сайян сӑмахӗ хыҫҫӑн Америка делегацийӗ ячӗпе Кэррей организациллӗ комитетӑн сӗнӗвне тепӗр хут ҫав комитета пӑхса тухма пама сӗннӗ. Америка представителӗ ҫав вӑхӑтрах ҫак сӗнӗве пӗр саслӑн йышӑнма чӗннӗ.

Кӑшт каласнӑ хыҫҫӑн, уйрӑм илсе кӑтартсан—Кузнецов юлташ тухса каланӑ хыҫҫӑн, ҫав сӗнӗве йышӑнман. Ирхи ларӑвӑн вӗҫӗнче Индири ӗҫ конфедерацийӗн председателӗ Пиллай сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Ситрин тунӑ сӗнӗве ырланӑ.

ЛОНДОН. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Февралӗн 8-мӗшӗнчи каҫхи ларура организациллӗ комитетӑн докладне малалла сӳтсе-явнӑ. Совет делегачӗ Тарасов юлташ сӑмах тухса каланӑ хыҫҫӑн конференци председателӗ Исаакс конференцие производствӑллӑ профсоюзсен конгресӗн Лондонта тин ҫеҫ пырса ҫитнӗ делегацийӗн пуҫлӑхӗпе—Томаспа паллаштарнӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче Томас ҫапла каланӑ: тавлашуллӑ ыйтусене пурне те килӗшӳллӗ пулмалла татса парас пулать. Вӑл организациллӗ комитетӑн докладне ҫирӗплетме ыйтнӑ, анчах ҫав докладӑн союзниксен тӑшманӗ пулнӑ ҫӗршывсенчи тата Польшӑн ирӗке кӑларнӑ пайӗнчи профсоюзсене конференцие чӗнме сӗнекен пайне кӑларса пӑрахса, ӑна организациллӗ комитета каялла пама сӗннӗ.

Ситрин ҫапла каланӑ: Англи делегацийӗ Томас сӗнӗвне йышӑнать, тенӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн делегатсем организациллӗ комитетӑн докладне ҫирӗплетме тата союзниксен тӑшманӗ пулнӑ ҫӗршывсенчи профсоюзсене тата Польшӑн ирӗке кӑларнӑ пайӗнчи профсоюзсене конференцие чӗнме сӗннине тепӗр хут пӑхса тухма организациллӗ комитета панӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн конференцин мандат комиссийӗн докладне итленӗ. Комисси председателӗ — производствӑллӑ профсоюзсен конгресӗн представителӗ Грин ҫапла каланӑ: конференцире мӗн пурӗ 204 делегат, вӗсем 51 ҫӗршывран килнӗ. Вӑл делегатсем хушшинче нейтральнӑй ҫӗршывсен представителӗсем те пур. Конференцире вӗсем ҫӗсене сӑнаса тӑракансен вырӑнӗнче шутланаҫҫӗ. Конференци мандат комиссийӗн докладне ҫирӗплетнӗ.

Союзниксен вӑрҫӑ ӗҫӗсем пирки резолюци ҫырма конференци уйрӑм комисси суйланӑ. Совет делегацийӗнчен вӑл комиссие Силоренко юлташ кӗнӗ.

Февралӗн 8-мӗшӗнче лару вӗҫӗнче организациллӗ комитет докладӑн тепӗр хут пӑхса тухма панӑ пайне сӳтсе-явни ҫинчен каласа панӑ. Комитет ячӗпе ку ыйтупа Австрали делегачӗ Торнтон сӑмах каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: союзниксен тӑшманӗ пулнӑ ҫӗршывсенчи профсоюзсен делегачӗсене тата Польша делегачӗсене чӗнес ыйтӑва сӳтсе-яврӗ. Финляндири, Болгарири, Румынири тата Италири профсоюзсен представителӗсене комитет пӗтӗм тӗнчери конференцие чӗнме сӗнет. Вӗсем делегатсем пулаҫҫӗ-и е сӑнаса тӑракан ҫынсем вырӑнӗнче шутланаҫҫӗ-и—ку ыйтӑва мандат комиссийӗ татса памалла. Польшӑри профсоюзсен делегачӗсене чӗнес ыйтупа Торнтон ҫапла каланӑ: Польшӑри профсоюзсен совечӗн делегачӗ тесе алӑ пуснӑ ҫынтан комитет ҫыру илчӗ. Вӑл ҫырура каланӑ тӑрӑх, Польшӑн Лондонри профсоюзӗсен конференцире ларакан делегачӗ Станчик Польша профсоюзӗсен ирӗкне палӑртмасть, вӗсен ячӗпе калаҫма пултараймасть: Польшӑра профсоюзсен Центральнӑй Советне туса хунӑ хыҫҫӑн ҫав орган Польша профсоюзӗсен юхӑмне палӑртса тӑни ҫинчен иккӗленӳ те пулма пултараймасть, тенӗ. Ҫырура каланӑ тӑрӑх тата ытти материалсем кӑтартнӑ тӑрӑх, тенӗ Торнтон, Польша морякӗсен профсоюзӗ тивӗҫлӗ организаци шутланса тӑмалла. Вӑл транспорт рабочийӗсен пӗтӗм тӗнчери федерацине тата Польша профсоюзӗсен советне кӗрет. Савӑнпа та комитет Польша морякӗсен профсоюзне конференцие чӗнмелле тесе шутлать.

Конференци союзниксен тӑшманӗ пулнӑ ҫӗршывсенчи профсоюзсене конференцие чӗнме сӗннине йышӑннӑ. Польша морякӗсен профсоюзӗн делегацине чӗнессине комитета каялла тавӑрса памалла тунӑ.

Данири лару-тӑру

КОПЕНГАГЕН УРАМӖСЕНЧИ ХЕҪПАШАЛЛА ТЫТАҪУСЕМ

СТОКГОЛЬМ. февралӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Копенгагенран илнӗ хыпарсем ҫине кӑтартса, Стокгольмри радио Дани столицинчи йывӑр лару-тӑру ҫинчен пӗлтерет. Юлашки эрнесем хушшинче Копенгагенра гитлеровецсемпе халӑх хушшинче юнлӑ тытӑҫусем пулса иртнӗ. Вӑл тытӑҫусенче 10 ҫынна вӗлернӗ е амантнӑ. Хулара нумай ҫынна ухтараҫҫӗ тата арестлеҫҫӗ. Пӗр урамра гитлеровецсем трамвая чарнӑ та трамвай ҫинчи ҫынсене пурне те урисене салтма хушнӑ. Ҫапла майпа вӗсем вӑрттӑн саракан листовкӑсене тупасшӑн пулнӑ.

Дани патриочӗсем гитлеровецсемпе вӗсен агенчӗсене хытӑ тавӑраҫҫӗ. Юлашки кунсенче Копенгаген хули урамӗсенче сутӑнчӑксен 6 виллине тупнӑ. Вӗсем хушшинче гестапо шпионӗ пулнӑ Лунд докторӑн вилли пулнӑ.

Фредериксхавнран кӑнтӑр Ютландие каякан чугун ҫул ҫинче саботажла ӗҫсем нумай тӑваҫҫӗ. Ҫавсене пула ку ҫул ҫинче поездсем ҫӳреме чарӑннӑпа пӗрех.

Саботажпа диверсиллӗ ӗҫсем ҫӗршывӑн ытти районӗсенче те пула-пула илеҫҫӗ.

РУМЫНИРЕ ПОЛИТИКАЛЛА КРИЗИС ӲССЕ ПЫНИ

БУХАРЕСТ, февралӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). (Вӑхӑтра ҫитермен). Юлашки эрнере политикӑллӑ кризис ӳссе пынӑ. Январӗн 28-мӗшӗнче нациллӗ-демократиллӗ фронт совечӗ программа пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав программа тӑрӑх вӑл нациллӗ-демократиллӗ фронт правительствине туса хурасшӑн. Январӗн 30-мӗшӗнче Бухарестра 300 000 ҫынлӑ демонстраци пулса иртнӗ, вӑл ҫакӑн пек лозунгпа иртнӗ: «Эпир нациллӗ-демократиллӗ фронт правительствине тума ыйтатпӑр!» Румынири профсоюзсен юлашки ларӑвӗ те ҫав лозунгпах иртнӗ.

«Тимпул» хаҫат февралӗн 1-мӗшӗнче ҫакӑн пек заголовок пичетлесе кӑларчӗ: «Столицӑри рабочисем нациллӗ-демократиллӗ фронт правительствине тума ыйтаҫҫӗ».

«Скынтейя» хаҫат «Нациллӗ-демократиллӗ фронт правительстви—ҫӗршыва ура ҫине тӑратмалли пӗртен-пӗр шанчӑк» ятлӑ статьяра ҫапла каланӑ: нациллӗ-демократиллӗ фронтӑн программине пичетлесе кӑларнипе рабочисем питӗ хавасланнӑ. «Фабрикӑсемпе заводсенче,—ҫырать хаҫат, — митингсемпе пухусем пулса иртеҫҫӗ. Вӗсенче рабочисем нациллӗ-демократиллӗ фронта вӗҫне ҫитиччченех пулӑшма хатӗррине палӑртаҫҫӗ».

Сылтӑм партисем нациллӗ-демократиллӗ фронтӑн программине хирӗҫ тухнӑ. Январӗн 30-мӗшӗнче национал-царанистсен «Дрептатя» хаҫачӗ хӑйӗн умстатьинче нациллӗ-демократиллӗ фронта суя сӑмахсемпе варалама хӑтланнӑ. Ҫавна пула печатниксен профсоюзӗ вӑл хаҫата наборлама чарнӑ, ҫавӑнпа та вӑл хаҫат виҫҫӗмӗш кун тухмасть ӗнтӗ. Либералсен пуҫлӑхӗ Дину Братиану та февралӗн 1-мӗшӗнче нациллӗ-демократиллӗ фронта хытӑ тапаннӑ.

Ҫавах та сылтӑм партисем хушшинче нациллӗ-демократиллӗ фронт программине йышӑнас пирки иккӗленни палӑрать. Февралӗн 4-мӗшӗнче хаҫатсенче национал-либералсен партийӗн Яссы округӗнчи руководителӗсен—Эдуард Лазарескупа Теодор Зипӑн заявленине пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл заявленире вӗсем нациллӗ-демократиллӗ фронт программипе йышӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тӗнчери лару-тӑру

Хӗрлӗ Ҫарӑн январь уйӑхӗнче пуҫланнӑ наступленийӗ халӗ те ҫаван пекех аплӑн сарӑлса пырать.

Пин километр тӑршшӗ фронт талкӑшӗпех пирӗн ҫарсем пӗр чарӑнмасӑр малалла куҫса пыраҫҫӗ. Тӑшмантан тытса илнӗ трофейсен хисепӗ тата нимӗҫсен вилнӗ е тыткӑна лекнӗ салтакӗсемпе офицерӗсен хисепӗ ӳссех пырать. Хӗрлӗ Ҫар пӗр чарӑнмасӑр наступлени туса пыни ют ҫӗршывсенчи хӑшпӗр обозревательсене тӗлӗнтерет. Вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем ҫапла калаҫҫӗ: Одер ҫине ҫитсен, совет ҫарӗсем наступлени туса пырасси «пӑчланса» ларӗ, нимӗҫсем совет ҫарӗсене «чарса лартӗҫ», тенӗччӗ. Вӗсем халь ухмаха тӑрса юлчӗҫ.

Одер шывӗ урлӑ каҫса, Одер шывӗн хӗвеланӑҫ енче малалла тапӑнса пымалли вырӑн туса хуни—Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑра Хӗрлӗ Ҫар тунӑ чи чаплӑ операцисенчен пӗри пулса тӑрать. Пирӗнпе союзлӑ ҫӗршывсенчи прогреслӑ пичет Балтика тинӗсӗнчен пуҫласа Будапешт хули таран пыракан фронтра совет наступленийӗ нихӑҫан курман пек хӑватлӑ пулса пынине пӗр шухӑшлӑ пулса палӑртать.

Комментаторсем каланӑ тӑрӑх, фронтсем пӗр-пӗринпе ҫав тери лайӑх ҫыхӑнса тӑни тата тӗрлӗ ҫарсен ӗҫӗсене пӗтӗҫтерме пӗлни совет главнокомандованине тӑшман ҫарӗсене аркатма, нимӗҫсен оборонине тарӑн кӗрсе кайса татма тата ҫав тери вӑйлӑн пырса ҫапма май пачӗ. Обозревательсем каланӑ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар маневрсем тума питӗ ӑста. Ҫавна пула тӑшманӑн пысӑк группировкисене нумай вырӑнсенче хупӑрла-хупӑрла илме пултарчӗ. Нимӗҫсен тӗреклетнӗ паха пункчӗсене хупӑрла-хупӑрла илни тата ҫапӑҫса илнӗ тӑшман гарнизонӗсене ӑнӑҫлӑн пӗтерсе пыни Хӗрлӗ Ҫарӑн стратегийӗпе тактики гитлеровецсен стратегийӗпе тактикинчен нумай лайӑхрах пулнине уҫӑмлӑн кӑтартса парать. Ҫар специалисчӗсене Хӗрлӗ Ҫарӑн тылне тата Хӗрлӗ Ҫара вӑрҫӑ хатӗрӗсем парса тӑрас ӗҫе ҫав тери лайӑх организациленни тӗлӗнтерет. Ҫавна пула ӗнтӗ совет ҫарӗсем Германи ҫарӗсене пыра-пыра ҫапассине вӑйлатсах пыраҫҫӗ, тӑшман ҫӗрӗ ҫинче нихӑҫан пулман пек хӑватлӑ наступлени туса пыма пултараҫҫӗ. Ют ҫӗршывсен пичечӗ уйрӑмӑнах Сталин юлташ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине, Сталин юлташӑн полководецла генийӗ тата организаторла таланчӗ Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫак историллӗ ҫӗнтерӗвӗсене тума май панине палӑртать.

Ҫухалса кайнӑ гитлеровецсен хӑйсем ҫав тери пысӑк поражени тӳснине йышӑнма тивет. Геббельс органӗ «Дас рейх» хаҫат февралӗн 6-мӗшӗнче ҫапла ҫырнӑ: «Советсем, ҫав тери вӑйлӑ хӗссе, нимӗҫсем тунӑ пӗвесене татса пӑрахрӗҫ», тенӗ. Февралӗн 8-мӗшӗнче ҫар ӗҫӗсем ҫинчен каласа, гитлерла Трансоцеан агентство совет ҫарӗсем малалла куҫса пынине «юр тасатакан калама ҫук пысӑк машинӑпа» танлаштарнӑ. Германи информаци бюровӗн ҫар обозревателӗ Макс Круль хӑйӗн статьинче ҫав кунах Балтика тинӗсӗпе Одер шывӗ хушшинчи участокри лару-тӑрӑва «пит хӑрушӑ» тесе хакланӑ.

Гитлерла пуҫлӑхсем нимӗҫ халӑхӗ тата администраци хӑраса ӳксе ҫухалса кайнине ҫынсене персе пӑрахнипе тата асаплантарнипе пусарса лартма хӑтланаҫҫӗ. Германин хӗвелтухӑҫ районӗсенчен пӑрахса тарнӑ паллӑ гитлеровецсене те штрафной батальонсене янисем е асаплантарса вӗлернисем йышлансах пыраҫҫӗ. Бромберг хулинчи полици начальникӗпе штандартенфюрер пулса ӗҫленӗ фон Салиша, хӑравҫӑ тесе айӑпласа, ҫар сучӗ персе вӗлермелле тунӑ. Бромберг округӗн управлени начальникне Кюна, Бромберг хулинче бургомистр пулнӑ Энста тата нацистсен районри руководителӗ пулнӑ Рампфа ӗҫрен кӑларса штрафной батальона янӑ.

Ҫав тери хӑраса ӳкнӗ нимӗҫсем Хӗвелтухӑҫ Германин районӗсенчен хӗвеланӑҫнелле, ҫав шутра Берлиналла та, тарма пуҫланӑ.

Пирӗнпе союзлӑ ҫӗршывсенчи хаҫатсем малалла аталанса пыракан совет наступленийӗ иккӗмӗш тӗнче вӑрҫинче паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнине, вӑл гитлерла Германие тӗпренех аркатса тӑкас вӑхӑта сывхартнине палӑртса пыраҫҫӗ.

Англипе Америкӑри нумай обозревательсем каланӑ тӑрӑх, совет наступленийӗ нимӗҫсем вӑрҫӑ пӗтессине мӗн чухлӗ те пулин тӑсма шанса тӑнине ялантӑхах пусарса лартрӗ. Вӑл наступлени хальхи вӑхӑтра та ӗнтӗ Германие хӑйӗн ҫар хӑватӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ стратегиллӗ ресурссемсӗр тӑратса хӑварчӗ. Англи экперчӗсем шутласа тухнӑ тӑрӑх, юлашки эрнесем хушшинче Германи хӗвелтухӑҫӗнче тӗштырӑн виҫӗ пайӗнчен пӗр пайне, ҫӗрулмин тӑватӑ пайӗнчен пӗр пайне, аш-какайӑн пилӗк пайӗнчен пӗр пайне, ҫӑвӑн тӑватӑ пайӗнчен пӗр пайне ҫухатрӗ. Кун ҫумне тата ҫакна хушас пулать: Германи ҫарпа промышленноҫӑн паха районне Тури Силезие ҫухатрӗ, унпа пӗрле тимӗр, ҫӗркӑмрӑк тата тӗслӗ металсем нумай ҫухатрӗ. Ҫапла вара, совет ҫарӗсем наступлени туса пынипе, гитлерла Германие ҫав тери вӑйлӑ пырса ҫапрӗҫ, татӑклӑ ҫапӑҫусем умӗн ӑна тата ытларах вӑйсӑрлатрӗҫ. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Пӗрлешӳллӗ нацисем кӗҫех ҫӗнтерессине кӑтартса парать. Хӗрлӗ Ҫар туса пыракан наступлени Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче Германи ҫарӗн тӗп вӑйӗсене тытса тӑчӗ ҫеҫ мар (кунта Германин 200 дивизийӗ ытла тӑрать), Германи ҫарӗсене хӗвеланӑҫ фронтӗнчен хӗвелтухӑҫ фронтне массӑллӑн куҫармалла турӗ. Ҫакӑ вӑл хӗвеланӑҫӗнче хальхи вӑхӑтра союзниксене пысӑк наступлени пуҫласа яма май парать.

Канадӑра тухакан «Фри пресс» хаҫат, Германи дивизийӗсене хӗвеланӑҫӗнчен хӗвелтухӑҫнелле куҫарни ҫинчен каласа, ҫак кунсенче ҫапла ҫырнӑ: «Ҫакна пула Эйзенхауэр акӑлчансемпе американецсен вӑйлӑ наступленине пуҫласа ярса, тӑшман хирӗҫ тӑнине пӗтерсе лартма пултарать». Америка радиокомментаторӗ Суинг февралӗн 8-мӗшӗнче тухнӑ хӑйӗн обзорӗнче ҫапла калать: «Хӗвеланӑҫ фронтӗнче Рундштедт пуҫласа янӑ контрнаступлени пӗтӗмпех пӑчланса ларчӗ. Вӑл наступление пӗтерес шӗн ҫапӑҫнӑ ҫынсем халь вӑл ӗҫрен пушаннӑ, вӗсем халь ҫӗнӗ ӗҫсем тума пултараҫҫӗ».

Совет хаҫачӗсенче союзлӑ виҫӗ державӑн—Совет Союзӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен тата Великобританин—руководителӗсен конференцийӗ ҫинчен пӗлтернине ҫапла каланӑ: «Нацистла Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑн юлашки тапхӑрӗнче пӗрле ҫапӑҫмалли ҫинчен пӗтӗмпех калаҫса татӑлнӑ» тенӗ. Ҫакӑн пек авторитетлӑ калани Германие хирӗҫ пыракан вӑрҫӑра пӗрлешӳллӗ стратеги ыйтӑвӗсем тӑрӑх союзниксем пӗр шухӑшлӑ пулнине кӑтартать. Пӗрлешӳллӗ нацисене тӑшман хирӗҫтерме хӑтланни каллех путланса ларчӗ.

Союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен конференцийӗн задачи—пӗтӗмӗшле тӑшмана аркатса тӑкмалли плансене пӗр-пӗринпе килӗштересси тата ытти союзниксемпе пӗрле нумай вӑхӑта пымалли мирӗн ҫирӗп никӗсне палӑртса хурасси пулать.

Сталин юлташ Рузвельтпа тата Черчилльпе халӗ тӗл пулнине вӗсем Тегеранра тӗл пулнипе танлаштарса, Англире тухакан «Дейли телеграф энд Морнинг пост» ҫапла ҫырать: союзниксем вӑрҫӑн юлашки тапхӑрӗ пирки тунӑ хӑйсен планӗсене ку хутӗнче те ӑнӑҫлӑн тата тӗплӗн пурнӑҫа кӗртӗҫ, тет.

«Германин стратегиллӗ резервӗсене — ҫырнӑ «Таймс» хаҫат февралӗн 7-мӗшӗнче —вырӑссен ҫав тери чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсене пула вырӑс фронтне куҫарнӑ пулсан, союзниксем те хӗвеланӑҫӗнчи фронтри нимӗҫсем хӑйсен ҫарӗсене илсе кайнипе мӗн май килнӗ таран усӑ курӗҫ. Союзниксен малта пыракан чаҫӗсем «Зигфрид» линийӗн минӑсем лартса тухнӑ вырӑнӗсем, дотсем, танксене ултавлакан вырӑнсем тата «дракон шӑлӗсем» хушшинче хӑйсем валли ҫулсем шыраҫҫӗ».

Дипломатиллӗ вӑрттӑн ӗҫсем туса, «вӑрҫӑра никам та ҫӗнтермелле мар» тума тӑрӑшнинчен тата тӗрлӗ «мирлӗ маневрсем» туниччен нимӗн те тухманнине куратӑр-качах гитлеровецсем Пӗрлешӳллӗ нацисене пӗр-пӗринпе хирӗҫтерме хӑтланма та пӑрахмаҫҫӗ-ха. Ҫак ӗҫре вӗсем Арцишевскипе унӑн компанийӗнчи Польша реакционерӗсемпе усӑ курма пӑхаҫҫӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех гитлеровецсем Германи поражени тӳсес вӑхӑта урӑхла та хатӗрленеҫҫӗ. Ун ҫинчен Сталин юлташ 1944 ҫулхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче хӑйӗн докладӗнче асӑрхаттарса хӑварчӗ. Виҫҫӗмӗш тӗнче вӑрҫине пуҫласа ярас шутпа гитлеровецсем пытанса ӗҫлеме хатӗрленеҫҫӗ. Ҫав шутпа вӗсем хӑйсен капиталӗсене «нейтральнӑй» текен ҫӗршывсене куҫараҫҫӗ, унта хӑйсен агентурине яраҫҫӗ. Германи, ҫавӑн пекех Испани, Аргентина территорийӗнче тата ытти ҫӗршывсенче те диверсантсен кадрӗсене хатӗрлеҫҫӗ. Союзниксем пӗрлехи пулни пӗтӗм этемлӗхе хирӗҫ пыракан фашизмӑн ҫав хӑрушлӑхне те пӗтерсе хурӗ.

Р. БЕСПАЛОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместитель секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—97, промышленноҫ пайӗн — 3—99, ялхуҫалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—33.

Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000

НТ 00025